● *Юбилей*

# Тиркевĕ те ырӑ суннипе пĕрехчĕ

**Писатель ĕçне хакланӑ чухне эпир унӑн произведенийĕсене кӑна шута хуратпӑр. Манӑн Александр Спиридонович Артемьевӑн калама çук пысӑк тепĕр ĕçне те мантарас килмест. Совет саманинче "наставник" сӑмах питĕ хисепречĕ. Хунтӑлакан писатель, çамрӑк автор хутне кĕрекен темелле-ши? Миçе çынна пулӑшман-ши вӑл? Миçе çынна литература ĕçĕ çине алӑ суласран çăлса хӑварман-ши? Пурӑннӑ пулсан халӗ те пулӑшатчĕ, авӑн уйӑхĕн 14-мĕшĕнче 85 çул тултармаллачĕ.**

Ĕçе кайнӑ чухне çула май Чӑваш кĕнеке издательствине кĕрсе тухмалли тупӑннӑччĕ. Курас тенине курнӑ, калаçас тенине калаçнӑ хыççăн васкаса урама тухрӑм. Мана хирĕç сулӑмпа кӑна утса пыракан Александр Спиридоновича чутах пырса çăнӑнаттăм. Вӑл мана хулран çăвӑтрĕ те тротуар хĕррине илсе тухрĕ. Малтанах шухӑшласа хунӑ пекех васкаса калаçма пуçларĕ. Манӑн ал çырӑвне издательство ӑна, Александр Спиридоновича, вӑрттӑн рецензилеме панӑ иккен. "Закрытое рецензирование" тенине çапла куçарчĕ вӑл. Ун пек чухне виçĕ рецензент пулмалла, пĕрпĕрне пĕлмелле мар. Пурин те хӑйĕн ятне-шывне кӑтартма юрамасть. "Рецензент" тесе кӑна алӑ пусмалла. "Ку рецензент кам?" тесе ыйтакан пулсан та издательство çыннисен калама юраман. Урӑхла каласан, ал çырӑвне "касма" шухӑшласа кӑларнӑ меслет. Эпĕ, издательствӑра ĕçлесе курнӑ çын пулсан та, кун çинчен пуçласа илтрĕм. Ытла та шӑлсӑр-çке ку тесе каласран Александр Спиридонович манӑн ал çырӑвĕнчи тӑватӑ сӑвва пӑрахаçланӑ, пичетлеме юрӑхсӑр тенĕ. Тепĕр вӑрттӑн рецензенчĕ Аркадий Эсхель пулнӑ. Вӑл та, калаçса татӑлнӑ пекех, тӑватӑ сӑвва "каснӑ". Виççĕмĕшĕ кам пулнине халӗ те пĕлместĕп. Вӑл миçе сӑвва тиркенине те чухлаймастӑп. Çапла вара, вӑрттӑн рецензентсен али витĕр тухнӑ "Хурӑнсар" сӑвӑ пуххи тематика планĕнче палӑртнинчен нумай ырханрах тухрĕ. Тиркенĕ сӑвӑсем вырӑнне урӑххисене сĕнмерĕм. Ытлашши калаçу пуласран шиклентĕм-ши?..

Пултарулӑх çыннисен пурин тенĕ пекех "эпĕ" тени чи малта пырать. Çавӑнпа тепĕрне пулӑшмалла чухне йӑпӑр-япӑр алӑ тӑсса памасть. Александр Спиридонович пĕрре те апла марччĕ.

Александр Спиридонович чухлӗ ал çырӑвĕ вуланӑ прозаик урӑх çукчĕ те пулĕ. Ырӑ сунса критиклекен рецензент сахаллччĕ. Темшĕн пурте чи малтан çитменлӗх шырамалла та çитменлӗх тупмалла тесе ӑнланаççĕ. Александр Спиридонович та куç тĕлне лекнĕ кӑлтӑксемпе çитменлӗхсене сиктерсе хӑварман. Анчах ыррине, ырлама тивĕçлине маларах курнӑ. Чи малтан лайӑххине шыранӑ. Çавӑнпа ӑна кўренсе пурӑннӑ, халӗ те кўренсе пурӑнакан писатель çук-тӑр.

Иван Вутланӑн пĕрремĕш кĕнеки мĕнле хĕнпе те асаппа пичетленсе тухнине лайӑх ас тăватӑп. Çак асапа чӑтса ирттернĕ хыççăн "литература" сӑмаха та илтес, алла калем тытас килми пулмалла. Унӑн пĕрремĕш повеçĕ "Асамат кĕперĕ" "Коммунизм ялавĕ" хаçатра çапӑнчĕ. Ӑна вулакан патне кĕнеке халлĕн çитерес тесе Иван Дмитриевичӑн 8 çул таранах "çăпӑçма" тиврĕ. Писательсен союзĕн проза секцийĕнче сўтсе явни те пулӑшмарĕ. Секци членĕсен сĕнĕвне издательство темшĕн йышăнмарĕ. Парти обкомне миçе çыру янине пĕлместĕп. Пĕрне Писательсен союзĕн правленине мерӑсем йышӑнма тавӑрса панӑччĕ. Правлени издательствӑна сĕнес тесе йышӑну турĕ. Анчах кĕнеке çаплӑх тухмарĕ. Такам сĕннипе-и, хӑйех тавçăрнипе-и – Иван Дмитриевич Артемьев патне пулӑшу ыйтма кайнӑ. Александр Спиридонович ку хутĕнче те ал çырӑвĕпе ĕтĕплĕн паллашнӑ, рецензи çырнисĕр пуçне авторӑн мĕн те мĕн тумаллине, ӑста мĕн катĕртмеллине, мĕн хушмаллине тĕплĕн çырса панӑ. Çапла майпа автор повеç ал çырӑвне "кондицие" лартайнӑ та. Александр Спиридонович Вутланшӑн рецензент кӑна мар, консультант та пулса тӑчĕ. Нумайччен килӑштерсе ĕçлерĕç вĕсем.

1984 çулта Александр Спиридонович хаçат-журналта пичетленнĕ, сунтӑхра выртнӑ статйисемпе рецензийĕсене пуçтарса "Пурнӑç чӑнлӑхĕпе писатель ӑсталӑхĕ" кĕнеке кӑларчĕ. Ӑна чӑваш литературине вĕрентекенсемпе вĕренекенсем вĕренӳ кĕнеки вырӑннех йышӑнчĕç. Хӑварт саланса пĕтрĕ.

Вулакансем мар, писательсем хӑйсем прозаиксенчен "чĕлхеллисене" пайӑрлаççĕ. Вĕсен йышĕнче Александр Спиридонович – малараx тӑракканни. Çавӑнпах пулĕ кашни статьяра, кашни рецензире стиль шӑйрӑкĕсене саваланине тупма пулать. Геннадий Хлебников критик Александр Спиридоновича "прозӑри поэт" тенине йышӑнмасӑр тӑма пултараймастӑп. Чĕлхе шӑйрӑкĕсем ун чунне ыраттармаллипех ыраттарнине кашни рецензипе статьярах туятпӑр.



Александр Спиридонович нумай çул Писательсен союзĕн правленийĕн членĕнче тӑчĕ. "Тӑван Атӑл" журналӑн редколлеги членĕччĕ. Писательсен союзĕн проза секцийĕн ĕçне хастар хутшӑнатчĕ. Прозӑпа пултарулӑх семинарĕсем ирттернĕ чухне ӑна ялан тенĕ пекех ертсе пыма шанаттӑмӑр.

Халӗ писатель ятне йӳнетсе ятӑмӑр. Ун чухне союз членне кĕрес текенсен пултарулӑхне пĕр çынна сиктермесĕр секцисен ларӑвĕсенче пӑхса тухнӑ. Проза секцийĕн ларӑвĕсене Александр Спиридонович сиктермен. Иккĕленӳ-мĕн çуралсан кашнинчех ун еннелле пӑха-пӑха илеттӗмĕр. Вӑл калани яланах вырӑна килнĕ. Писательсен хушшинче те хисеплĕ ятсемпе наградӑсем ыйтаыйта илекенсем пулман мар. Паян та пур. В.А. парти пухӑвне "сыпса" пынӑччĕ те – халиччен пулманнине кӑшкӑрашса ларма тытӑнчĕ. "В.С., чарӑнӑр!" – тесе темиçе те асӑрхаттарчĕ пухӑва ертсе пыраканĕ. "Халӑх писателĕ" парӑр – чарӑнатӑп", – терĕ хайхискер. Тепĕр пухура В.У. ятарлӑ пенси илме хисеплĕ ят кирлĕ пулнипе хӑйне "Культурӑн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ" ятлӑ тума тархасласах ыйтрĕ. Ку халӗ, çĕнĕ ĕмĕрте, пулса иртрĕ. Правленин пĕр ларӑвĕнче сумлӑ поэт ыйту хускатрĕ: "Ефимов – халӑх поэчĕ, унӑн орден пур, Сементер – халӑх поэчĕ, унӑн та орден пур. Эпĕ те халӑх поэчĕ, манӑн орден çук". Правлени членĕсенчен пĕри: "Çырма пӑрахни миçе çул çитнĕ ятпа пулать вара ку награду?" – тесе ыйтсан шӑпланчĕ. Сиресире пӑхӑр-ха мĕн пур справочнике. Александр Спиридонович̆ӑн мĕн пур?

"Тӑван Атӑл" редколлегийĕн пĕр ларӑвĕ асран тухмасть. Ун чухне журналсем çулталăк премийĕсемпе хавхалантаратчĕç. "Тӑван Атӑл" журнал редакцийĕ çулталăк тӑршшĕнче тĕп жанрсемпе çырса пичетленĕ чи лайӑх произведенисемшĕн тӑватӑ преми паратчĕ. Проза произведенийĕсенчен Александр Спиридонович̆ӑн "Пукра" повеçне палӑртса терĕмӑр. Алӑ çĕклесе сасӑлама вӑхӑт çитсен вӑл вырӑнтан хускалчĕ те лӑпкӑ сасӑпа каларĕ: "Кашни номернех вуласа пытӑм. Ман шутпа, "Чĕкеç йӑвине ан салатӑр" повеç ку премие илме тивĕçлĕрех".

Çапла çав çулхине "Тӑван Атӑл" журналӑн премине илекенсем тӑваттӑн вырӑнне пиллӗкĕнех пултӑмӑр.

■ **Денис ГОРДЕЕВ,**
**Чӑваш халӑх писателĕ**